Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчеле тухать

101 (7955) № ✻ Юн кун, 2011 çулхи раштав (декабрь) уйăхĕн 14-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Ĕçтешĕсемшĕн – ырă тĕслĕх

Ĕçре пултарullă

***Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан И.Ю. Яшмолкина Муркаш райповĕнче 1992 çултанпа тăрăшать. Ирина Юрьевна кунта вунă çула яхăн тĕп бухгалтер пулса вăй хурать, çамрăк специалистсемшĕн ырă тĕслĕх вырăнĕнче, ыттисемшĕн – ăста пуçаруçă, шанчăклă ĕçчен.***

***Мĕн ачаллах вăл хăйĕн пурнăçне шут ĕçĕпе çыхăнтарма ĕмĕтленнĕ. Çапла вара шкултан ăнăçлă вĕренсе тухнă хыççăн техникума çул тытать. Çамрăкскер çакăнпа кăна çырлахмасть-ха, пĕлĕве малалла ӳстерме ĕмĕтленет. И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетне вĕренме кĕрет. Пухнă пĕлĕве ĕçре вăя кĕртсе пырать. Аслă ĕçченсенчен сĕнӳ-канаш илет. Малтан мала ăнтăлакан специалист хăйне тĕрлĕ енлĕ аталантарать. Районта тата республикăра иртекен конкурссене хутшăнать. Çамрăк ĕçчен çакăнпа кăна чикĕ тумасть-ха, Мускав шайĕнчи конкурсра та ырă ят çĕнсе илет. Ăс-тăна, пултарулăха тăтăш туптать Ирина Юрьевна, Шупашкар хулинчи кооператив институтĕнчен те ăнăçлă вĕренсе тухать. Ăста специалист пулнипе пĕрлех вăл – çемье вучахĕн çирĕп тыткăчи те. Унăн ачисем вара пур енлĕ ăста амăшĕпе чăннипех те хăпартланма, ыттисем умне тĕслĕхе лартма пултараççĕ.***

*Р. ИЛЛАРИОНОВА.*



Кĕскен

### Олег Макаров отставкине йышăннă

Декабрĕн 9-мĕшĕнче ЧР Президенчĕ Михаил Игнатьев ЧР Министрсен Кабинечĕн Председательне Олег Макарова вăл ыйтнипе отставкăна янă.

Кабинет пуçлăхĕн тивĕçĕсене председатель çумĕ – финанс министрĕ Михаил Ноздряков пурнăçлать.

### Çĕнĕ парламент ĕçе тытăнать

Республикăри çĕнĕ парламентăн пĕрремĕш сессийĕ декабрĕн 15-мĕшĕнче уçăлать.

ЧР Патшалăх Канашне 44 депутат суйланнă. Пĕрлехи округпа партисен списокĕсемпе – 22 депутат, пĕр мандатлă округсемпе – 22 депутат.

### Тупăш ытларах налукран пуçтарăнать

Районăн пĕрлештернĕ тупăшĕсен пĕтĕмĕшле калăпăшĕ кăçалхи декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 364,6 миллион тенкĕпе танлашнă. Вăл шутран каялла тавăрса памалла мар майпа республика бюджетĕнчен 269 миллион тенкĕ куçарнă, районăн налук тата налукпа çыхăнман тупăшĕсем – 95,6 миллион тенкĕ. Ку кăтартусем иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан 93 тата 108,4 процентпа танлашаççĕ.

Районăн пĕтĕмĕшле тупăшĕнче 86 проценчĕ (81,7 миллион тенкĕ) – налук тупăшĕсем. Вырăнти бюджета налук чылай хывакансем шутĕнче «Сеспель» предприяти, Муркашпа Мăн Сĕнтĕр райповĕсем, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики, Ильич яч. хис., «Свобода», Суворов яч. хис. хуçалăхсем.

Йышăнусем

**Депутатсен Муркаш район Пухăвĕн 2011 çулхи декабрĕн 12-мĕшĕнчи С-13/1 № йышăнăвĕ**

***Пĕр мандатлă 9-мĕш Катькас суйлав округĕпе депутатсен Муркаш район Пухăвĕн депутачĕн заявленийĕ çинчен***

Чăваш Республикинчи Муркаш район Уставĕпе килĕшӳллĕн депутатсен Муркаш район Пухăвĕ çапла йышăннă:

1. Пĕр мандатлă 9-мĕш Катькас суйлав округĕпе депутатсен Муркаш район Пухăвĕн депутачĕн полномочийĕсене чарса лартасси пирки Николай Григорьевич Ванеркинăн заявленине тивĕçтерес.

2. Çак йышăнăва официаллă майпа пичетлесе кăларма тивĕç.

**Муркаш район пуçлăхĕ
И.В. НИКОЛАЕВ.**

**Депутатсен Муркаш район Пухăвĕн 2011 çулхи декабрĕн 12-мĕшĕнчи С-13/3 № йышăнăвĕ**

***Пĕр мандатлă 9-мĕш Катькас суйлав округĕпе депутатсен Муркаш район Пухăвĕн пиллĕкмĕш созыври депутатне суйлассипе хушма суйлав иртерессине палăртасси çинчен***

Чăваш Республикин 2003 çулхи ноябрĕн 25-мĕшĕнче йышăннă 41 № «Чăваш Республикинче вырăнти самоуправлени органĕсене суйласси çинчен» Саккунĕн 5-мĕш тата 49-мĕш статйисемпе килĕшӳллĕн депутатсен Муркаш район Пухăвĕ çапла йышăннă:

1. Пĕр мандатлă 9-мĕш Катькас суйлав округĕпе депутатсен Муркаш район Пухăвĕн пиллĕкмĕш созыври депутатне суйлассипе хушма суйлав 2012 çулхи мартăн 4-мĕшĕнче иртерес.

2. Çак йышăнăва Чăваш Республикин Тĕп суйлав комиссине ярса парас.

3. Çак йышăнăва официаллă майпа пичетлесе кăларма тивĕç.

**Муркаш район пуçлăхĕ
И.В. НИКОЛАЕВ.**

Пенси ыйтăвĕсемпе

## Ватлăх валли пухнă? Илме пултаратăр

2012 çулта пухăнакан пенсисене пуçласа тӳлеме тытăнаççĕ. Çитес çул пухăнакан пенси счечĕсем çинчен тивĕçлĕ укçа суммисене 400 пин çынна яхăн илĕ.

Ĕç пенсийĕн пухăнакан пайне пĕрлехи правилăсене пăхăнса шутласа парĕç тата тӳлĕç. Кунта страховщик кам пулни пĕлтерĕшлĕ мар: патшалăхăн Пенси фончĕ-и вăл е патшалăхăн шутланман пĕр-пĕр пенси фончĕ.

Пухăнакан пенси виçисене тăватă тĕрлĕ тӳлесе татассине пăхса хунă: пĕр харăс, палăртнă вăхăтра, ĕмĕрлĕх (виличчен) тата тĕпкĕчре юлакансене тӳлесси.

Пенсионерсенчен ытларахăшĕ хăйсен пухăнакан пенсийĕсене ĕмĕрĕпех илсе тăрĕ. Уйрăм самантсенче кăна пухăннă суммăна пĕр харăс илме май пур. Ку мелпе пухăнакан пенси виçи пысăк маррисем – пĕтĕмĕшле пенси виçин 5 процентне те çитмен чухне – усă курма пултарĕç.

Кусем вĕсем чи малтанах «вăтам вăхăтри» ĕçченсем. Кун пеккисем реформа вăя кĕрсен малтанхи икĕ çулĕнче пенси пухăнмалли схемăна хутшăннă, кайран унран тухса ӳкнĕ. Çавна май пысăк сумма пухма пултарайман.

Саккун виççĕмĕш вариантпа та усă курма май парать. Ку вăл пухăннă суммăна палăртнă вăхăтра – 10 çултан кая мар тапхăрта илесси. Анчах та ку услови хăйсен пухăнакан пенси виçисене патшалăх финансласси программине хутшăннисене тата хăйсен ача амăшĕн капиталĕсене Пенси фондне уйăрнисене кăна пырса тивет. Ку йĕрке те Раççей Пенси фончĕпе патшалăхăн шутланман пенси фончĕсемшĕн пĕр пекех.

Саккунпа пăхнă тăваттăмĕш тĕс – страхланнă вилнĕ çыннăн пенси суммине еткерĕсене парасси. Кунта вилнĕ çыннăн мăшăрĕ, ачисем, ашшĕ-амăшĕ кĕреççĕ.

**Хамăр инф.**

Райадминистрацире

## Хисеп грамотипе наградăланă

***Район администрацийĕн 2011 çулхи ноябрĕн 25-мĕшĕнчи 1269 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

1. Районăн экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвне тивĕçлĕ тӳпе хывнăшăн – **Валерий Михайлович ПАВЛОВА**, Чăваш Республикинчи потребительсен союзĕн канашĕн председательне.

2. Нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн – **Владимир Геннадиевич ДИМИТРИЕВА**, А.Н. Вязов уйрăм предпринимателĕн распиловщик станочникне.

Районти парламентра

## Черетсĕр лару

Тунти кун депутатсен районти Пухăвĕн черетсĕр 13 ларăвĕ ĕçленĕ.

Лару ĕçне депутатсен районти Пухăвĕн ертӳçин çумĕ В.И. Вязов ертсе пынă.

Депутатсем çак кун йĕркине çирĕплетнĕ:

1. РФ Патшалăх Думин улттăмĕш суйлаври депутатсен, ЧР Патшалăх Канашĕн пиллĕкмĕш суйлаври депутатсен, депутатсен Муркаш район Пухăвĕн 1-мĕш Октябрь округĕн депутачĕн тата Чуманкасси ял тăрăхĕн депутатсен Пухăвĕн 5-мĕш Якаткасси округĕн депутачĕн суйлавĕсен итогĕсем çинчен.

2. Депутатсен Муркаш район Пухăвĕн пĕр мандатлă 9-мĕш Катькас суйлав округĕн депутачĕн заявленийĕ çинчен.

3. Депутатсен Муркаш район Пухăвĕн пĕр мандатлă 9-мĕш Катькас суйлав округĕн депутачĕн хушма суйлавне палăртасси çинчен.

Кун йĕркинчи пĕрремĕш ыйтупа депутатсем районти территори суйлав комиссийĕн ертӳçи Л.Ю. Тарасова пĕлтернине итленĕ.

Иккĕмĕш ыйтупа депутатсем Н.Г. Ванеркин депутат пĕлтернине итленĕ. Вăл ЧР Патшалăх Канашĕн депутатне суйланнăран унăн районти парламент депутачĕн тивĕçĕсене чарса лартнă.

Виççĕмĕш ыйтăва пăхса тухса депутатсем 9-мĕш Катькас округĕпе хушма суйлав ирттерме палăртнă.

Лару йышăнăвĕсемпе паянхи номерте паллашăр.

Районта

## Йĕлтĕрçĕсем, старта!

Çитес шăмат кун, декабрĕн 17-мĕшĕнче, Муркашра хĕллехи спорт сезонне уçаççĕ. Яланхи вырăнта – йĕлтĕр базинче – пысăк ăмăрту 10 сехет çурăра пуçланать.

Пур ĕç коллективĕсен, ял тăрăхĕсен тата шкул ачисен командисене хăйсен ертӳçисемпе пĕрле старта йыхравлатпăр. Тĕп шкулта вĕренекенсен командисенче тата ĕç коллективĕсен командисенче 4-шар, вăтам шкул командисенче 6-шар çын пулмалла.

Синоптиксем çанталăк сивĕ пулмасса шантараççĕ. Çавăнпах йĕлтĕрпе ăмăртакансем кăна мар, вĕсене курма пыракансем те хаваспах спорт уявне хутшăнасса шанатпăр. Апла пурте усă сывлăша сывлăха çирĕплетме тухăр!

**Вĕрентӳ пайĕ.**

Выражаем благодарность

Моргаушский РК КПРФ благодарит всех жителей района, активно участвовавших на прошедших выборах и отдавших свои голоса за кандидатов от КПРФ Карягина Ф.А., Анисимова В.И., Кондратьеву Т.П., Орaину Т.И. А также выражает искреннюю благодарность за доверие. Надеемся, что и впредь вы будете верны нашим общим интересам. Поздравляем всех с наступающим Новым годом!

**Моргаушский РК КПРФ.**

Саламлатпăр



Савнă мăшăра, юратнă аттене, ăшă кăмăллă кукаçие, асаттене – Çĕньял Хуракасси ялĕнче пурăнакан **Виталий Леонтьевич ЯКИМОВА** юбилей ячĕпе чун-чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-çул сунатпăр. Эсĕ пурри – нимĕнпе виçейми пуянлăх, савăнăç, телей. Кун-çулу вăрăм та такăр пултăр. Турри сана вăй-хал парнелетĕр, чир-чĕртен упраса тăтăр. Юратнă мăшăрупа, ачусемпе, тăванусемпе яланах савăнса пурăн. Эпир сана пурте юрататпăр, хисеплетпĕр. Тавтапуç сана пуриншĕн те.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ывăлĕпе кинĕ, 5 мăнукĕ, хăтипе тăхлачи тата тăванĕсем.**

Çырăнтару – 2012

**«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2012 çулхи январь уйăхĕнчен илсе тăма унчченхи хакпах çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнмалли хак: 191 тенкĕ те 70 пус.**

***Хаçат редакцийĕ.***

Суд материалĕсем тăрăх

# Ултавăн ури кĕске

Ку ĕç пирки каласа париччен малтан Раççей Федерацийĕн Уголовлă кодексĕн 306-мĕш статйи пирки аса илтерни ытлашши пулмĕ. Унта ăнлантарнă тăрăх çын пирки ятарласа суйса элеклени, çăхав пани те преступлени туни шутланать. Уншăн икĕ çул таран ирĕкрен те хăтарма пултараççĕ.

Акă пĕррехинче Чуманкасси ялĕнче пурăнакан пĕр гражданин суда заявлени илсе пычĕ. Вăл хăйĕн кӳршине айăплать. Кӳрши ăна 2011 çулхи майăн 14-мĕшĕнче çĕрле 11 сехетре килне пырсах хĕнесе хăварнă имĕш. Хăй ăнлантарнă тăрăх вăл çывăрма выртнă пулнă. Кӳрши çăм чăлха ăшне чул муклашки чикнĕ хатĕрпе ун патне килне пырса кĕнĕ, ăна пуçĕнчен çапнă. Çапла вара вăл тăнне çухатнă. Тепĕр эрнерен кăна, майăн 22-мĕшĕнче, тăна кĕнĕ. Пуçĕ çинче хытса ларнă юн пулнă, пуçĕ сиенленнĕ.

Анчах çак айăплав тĕрĕслĕхпе пĕр килменни тӳрех палăрчĕ. «Инкек тӳсекен» хăйне пуçран çапнă пирки полицие тӳрех мар, тепĕр икĕ уйăхран – июлĕн 11-мĕшĕнче пĕлтернĕ. 2011 çулхи июлĕн 12-мĕшĕнче ирттернĕ судпа медицина экспертизи те ăна хĕненин е çаплин паллисене пачах тупса палăртман.

Ялта пурăнакансенчен чылайăшĕ суд ларăвне пычĕ. Вĕсенчен пĕри те айăплакана (тепĕр майлă каласан, «инкек тӳсекене») ырă енчен палăртмарĕ: вĕçĕм эрех ĕçет, урăлла курма çук, час-часах кӳршисене е пĕрле эрех сыпма кăмăл тунисене укçа вăррине тытать, е ăна магазинра укçа каялла тавăрса парса çитерейменçĕ т. ыт. те. Ӳсĕрле магазин çывăхĕнче е ытти çĕрте те йăваланса выртни, çывăрни сахал мар пулнă. Ӳсĕрскерне час-часах ял çыннисем çулла пулсан çавăтса, хĕлле вара çунашкапа та килне леçсе хăварни пулнă. Эрни-эрнипех урăлса курмасть. Ӳсĕрле тирĕнсе кайса пит-куçне чĕрсе пĕтерни, кĕлетке таврашне амантни тăтăшах пулать.

Асăннă айăплава пула суд тенкелĕ çине ларма тивнĕ кӳрши вара пачах урăхла çын. Ăна ӳсĕр пулнине ял çыннисем астумаççĕ те. Унăн эрех ĕçсе айкашса çӳреме вăхăчĕ те çук. Çăва тухсан унăн эрех сыпма мар, йĕркеллĕ çывăрса канма та вăхăчĕ çитмест. Хăйĕн тракторĕпе çынсен пахчисене сухаласа пулăшать, акса-лартса парать.

2011 çулхи майăн 14-мĕшĕнче те унăн кӳрши патне кайса хирĕçӳ пуçарма, çитменнине ăна çапса-хĕнесе пĕтерме сăлтавĕ те, вăхăчĕ те пулман. Ун патне пачах çӳремест вăл. Хĕвел тухнă-тухман ĕçе пикенет те кунĕпех, çĕрлеччennex тракторĕпе хăйĕнне те, кӳршисенне те çĕр улми лартать, ял хуçалăх культурисем акса парать.

Ĕçчен кӳршĕн килĕнче ĕç вĕресе тăни эрех хыпса лартса сулланса çӳрекене килĕшмен, ăмсантарнă ĕнтĕ. «Тăн кĕртес-ха кăна пĕрре» тесе шут тытнă пулас çакскер. Хăйне «çапса амантакан» кӳршинчен вăл мораль тĕлĕшĕнчен сиен кӳнĕ тесе 50 пин тенкĕ шыраса пама ыйтрĕ.

Паллă ĕнтĕ, суд унăн ыйтăвне тивĕçтермерĕ. Мĕншĕн тесен пур енĕпе те кунта ăна никам та çапманни-хĕнеменни палăрчĕ. Апла пулсан ултав çиеле тухрĕ. Ултавăн ури кĕске тесе ваттисем ахальтен каламан ĕнтĕ. Тепĕр тесен, çынна валли шăтăк чавакан хăй çавăнтах сикекен.

**Т. САЛДЫРКИНА,**
**1-мĕш номерлĕ суд участокĕн миравай судйи.**

# Çынна кӳрентертĕн – ответ тыт

Влаç представительне вăл хăйĕн тивĕçĕсене пурнăçланă чухне халăх умĕнче кӳрентерни те преступлени туни шутне кĕрет. РФ Уголовлă кодексăн 319-мĕш статйипе килĕшӳллĕн çакăн пек хăтланнăшăн айăплă çынна 40 пин тенкĕ таран е 3 уйăхри ĕç укçи чухлĕ штрафлама, 120 сехетрен тытăнса 180 сехет таран обязательнăй ĕçсене явăçтарма, кунпа пĕрлех пĕр çулталăк таран юсанмалли ĕçсене яма пултараççĕ. Çакă вăл граждансем хăйсене влаç органĕсен представителĕсемпе йĕркеллĕ тытмалли, пĕр-пĕрне сăмахпа кӳрентермелле марри пирки калать. Шел пулин те вара кун пек тĕслĕхсем пулмаççĕ мар.

Акă кăçалхи июлĕн 17-мĕшĕнче 20 сехет те 30 минут тĕлĕнче ГИБДД ĕçченĕсем Калмăк ялĕнче Кооперативная урамра ВАЗ-2104-3 автомашинăна чарнă. Водитель ӳсĕр пулни палăрнă. Водитель удостоверенийĕпе автомашина документĕсене кăтартма ыйтсан ӳсĕр çын урсах кайнă, киревсĕр намăс сăмахсемпе ятлаçма пуçăннă. ГИБДД ĕçченĕсем ăна чарăнма ыйтни те усăсăрах пулнă.

Асăннă тĕслĕх нравственноçăн нимĕнле нормисемпе те килĕшсе тăмасть. Обществăра хăйне çапла тытни, çын чысне варалани преступлени туни пулса тăрать.

Асăннă ĕçе Муркаш район судĕнче пăхса тухма тиврĕ. Пур енне те шута илнĕ хыççăн суд айăплав виçине палăртнă чухне штрафпа кăна çырлахма йышăнчĕ. Çапла вара Муркаш район сучĕ 2011 çулхи сентябрĕн 29-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе асăннă гражданин тĕлĕшпе 35 пин тенкĕ штраф тӳлесси пирки йышăну кăларчĕ.

Кăçали октябрĕн 11-мĕшĕнче приговор вăя кĕчĕ.

**Э. СТЕПАНОВА,**
**Муркаш район сучĕн судйи.**

# Патшалăх услугисемшĕн укçа хăйпăтаймĕç

***Чиновниксен саккунсăр майпа граждансенчен укçа илнĕшĕн хăйсен кĕсйинчен тӳлеме тивĕ***

Саккун

**Патшалăх услугисем памалли вăхăта тăсса пынăшăн тата саккуна пăсса уйрăм улугăсемшĕн граждансенчен укçа пуçтарнăшăн малашне чиновниксене штраф тӳлеттерме пăхнă. Услугăпа вăхăтра тивĕçтермен пулсан штраф виçи 3 пин тенкĕрен тытăнса 5 пин тенкĕ таран пулма пултарать. Укçа «вăрттăн» илекен служащисен 5 пин тенкĕрен тытăнса 10 пин тенкĕ таран тӳлеме тивĕ.**

Çакăн пек наказанисем палăртнă РФ Президенчĕ Дмитрий Медведев алă пуснă Саккунра.

Граждансенчен килекен сĕнӳсене, заявленисене, çăхавсене пăхса тухса йышăнусем тăвасси, хурав парасси унчченни пекех юлать. Вĕсене пăхса тухмалли вăхăт пĕчĕкех мар (30 кунпа танлашать, хăш чухне ку вăхăта тăсма та пултараççĕ). Кунпа пĕрлех ячĕшĕн панă хуравшăн е пĕлтернине шута илменшĕн никам та ответ тытмасть. Саккунпа килĕшӳллĕн вара предпринимательсен кун пек мел те çук.

Иккĕмĕш çул – суда каясси. Кунта вара вăхăт вăраха каять, йышăну тăвичен айăпăн актуаллăхĕ пĕтме те пултарать.

Çĕнĕ саккунпа тĕрĕссипе чиновниксен çăхава пăхса тухмасăр тăма шанăç юлмасть. Ыйтăва заявление регистрациленĕренпе 15 кун хушшинче пăхса тухмалла пулать. Енчен те гражданин унран патшалăх услугисен илессипе документсем йышăнма е панă документсенчи йăнăшсене тӳрлетме килĕшменни пирки çăхавлать пулсан, е тата вĕсене тавăрса памалли вăхăта тăсса янă пулсан – çăхава 5 кун хушшинче пăхса тухĕç. Тепĕр куннех заявлени паракана хурав парĕç. Хурава вара çырупа е электронлă майпа парасси заявитель ирĕкĕнчен килет.

Çăхава пăхса тухнă май администрацилă майпа правăна пăснă тĕслĕхсем пур пулсан материалсене пĕр тăхтаса тăмасăр прокуратурăна ярса парĕç. Çăхава пăхса тухассипе должноçри полномочиллĕ çын срока пăхăнмасть е çăхава пачах пăхса тухма килĕшмест пулсан вара ăна 25 пин тенкĕрен тытăнса 30 пин тенкĕ таран штраф пама пултараççĕ.

Çăхавсене почтăпа та, электронлă формăпа ведомствăсен официаллă сайчĕ е патшалăх услугисен пĕрлехи тата регионти порталĕ урлă та ярса пама пулать.

Хăвăрăн хушамата, ята, açăр ятне, ăçта пурăннине е юридически лицо адресне, хăвăрпа çыхăнмалли телефон номерне тата почта адресне кăтартма ан манăр. Вĕсем сирĕн пата хурав ярса пама кирлĕ.

Кунпа пĕрлех эсир мĕнле орган тĕлĕшпе килĕшӳсĕр пулни, сире конкретлă мĕн килĕшменнитивĕçтерменни пирки хăвăрăн шухăшăра çырса пĕлтерес пулать.

**Елена КУКОЛ.**

Çырăнтару – 2012

# Райхаçатпа пулар пĕрле!

Эй, ял çынни – Муркаш çынни!
Район хаçачĕ – сан валли.
Санпа пулсассăн вăл ялан
Юлмастăн эсĕ пурнăçран.
Шкул ачисем, яш-кĕрĕмсем,
Эсир – пуласлăх хуçисем.
Малашлăхра пулар пĕрле,
Вĕренӳре те, ĕçре те.
Тен эсĕ тухнă пенсие?
Хаçат вула кунĕпеле.
Ăна çур çуллăх çырăнма
Патшалăх паратех сана.
Мухмăр пусать-и тен хăшне –
Ан хыпалан «сутти» патне.
Тытса вула райхаçата:
Сана кирли пайтах унта.
Эс кам пулсассăн та ан ман:
Район хаçачĕ вăл – пĕр сан.
Апла кашни ун номерне
Тытса вулаччăр килĕрен.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Страховани рынокĕнче

# Ф.В. Кирпичникова: «Поддержка» патшалăх компани сирĕн шанăçа тӳрре кăларать»

***Ӳкессе пĕлнĕ пулсан тӳшек сармалла пулнă теççĕ халăхра. Пурнăç ялан пĕр тикĕссĕн пырать тесе калама вара йывăр: паян кăна аванччĕ, кĕтмен çĕртен инкек хăй пирки систерет. Пĕчĕк пăтăрмаха чăтса ирттерме пулать, анчах та пысăк хуйхă килсе çапсан пĕчĕн-иккĕн нимĕн те тăваймăн. Çавăнпа та харпăр хăй пурнăçне, çурт-йĕре, выльăх-чĕрлĕхе тата ыттине маларах страхлани – питĕ тĕрĕс утăм. Ку тĕлĕшпе вара сире шанчăклă «Поддержка» патшалăх страхлакан компани яланах пулăшма хатĕр, вăл страховани рынокĕнче 1992 çултанпа ĕçлет. Апла пулсан ăна ура çине çирĕп тăма ĕлкĕрнĕ теме пулать. Унăн ĕçĕ-хĕлĕпе тĕплĕнрех паллаша компанин Муркаш районĕнчи представительствин ертӳçипе Ф.В. КИРПИЧНИКОВĂПА калаçрăм.***



**«Поддержка» патшалăх компани тата «Моргауши – Согласие» ял хуçалăх кредит кооперативĕ хамăр клиентсене уйрăмах, çавăн пекех ура çинче çирĕп тăракан шанчăклă компани клиенчĕ пулма палăртнисене çитсе килекен Çĕнĕ çул уявĕ ячĕпе саламлать. Турри пуринчен те инкек-синкеке сирсе пытăр. Патшалăх хӳтлĕхĕнчи компание шаннăшăн, эсир те пирĕнпе пĕрле тăрăшнăшăн тав тăватăп. Эпир шанатпăр, пурнăç тумхахĕнче айккинелле сулăнман, сире чăннипех те йывăрлăхра пĕччен хăварман компани малашлăхĕ пысăк, пурнăçламалли вара татах та чылай. Çирĕп сывлăх та телей, çемьере килĕшӳ пултăр сирĕн. Эпир сирĕнпе – пысăк вăй!**

**– Фаина Валентиновна, çынна вăл е ку компание суйласа илме çăмăлах та мар, мĕншĕн тесен халĕ халăха шантаракансем йышлансах пыраççĕ: тахçанах ĕçлекенсем, тин кăна йĕркеленнисем. Çапах та сирĕн компани клиенчĕсем питĕ йышлă, мĕнпе илĕртет-ха «Поддержка» патшалăх компанийĕ хăй патне?**

– Паллах, вăл е ку объекта страхлас ĕçре никам та ирĕксĕрлемест, çын хăй шанакан компание унăн условине кура хăех суйласа илет. Пирĕн компани патшалăх хӳтлĕхĕнче пулни пуриншĕн те питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. «Поддержка» патшалăх страхлакан компанинчи Чăваш Республикин тӳпи 34,36 процентпа танлашать. Апла пулсан çыннсемпе страховани килĕшĕвĕ туса пухăннă укçа-тенкĕ Чăваш Республикинче тĕрлĕ тĕллевпе усă курма юлать, халăх укçи-тенки ют тăрăха каймасть. Çакă паллах, пирĕншĕн те, çынсемшĕн те питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çавăн пекех «Поддержка» тилхепине уйрăм çын та тытса пымасть, ултавлă информацие, услугăпа халăха илĕртмест.

Компани уйрăм çынсемпе кăна мар, республикăри ял хуçалăх таварĕсем туса кăларакан тĕрлĕ формăллă хуçалăхсемпе те тачă çыхăнса ĕçлет. Çулсеренех тĕрлĕ культурăна, пурлăха страхлать, çĕр ĕçченнĕ çулсеренех курăмлă пулăшу кӳрет. Иртнĕ çул çанталăк условийĕсене кура шар курнă хуçалăхсен тăкакĕсене туллин саплаштартăмăр.

Ял хуçалăхĕнчи тавар туса кăларакансемсĕр пуçне компани социаллă тĕрлĕ программăпа 50 пине яхăн çынна страхланă, туятăр пулĕ, еплерех пысăк йыш пирĕн. Страхлакан компани Федерацин страховани надзорĕн службине пăхăнать, апла пулсан пĕтĕм ĕç-хĕл алă çинчи пек яр уççăн курăнать. Кунта вара нимĕнле ултав-суя та пулма пултараймасть.

Пирĕн ĕçĕн тĕп тĕллевĕ хамăр клиентсен интересĕсене туллин тивĕçтересси пулса тăрать. Çавăнпа та эпир клиент шухăшне тĕпе хуратпăр, вĕсене çăмăллатнă майсем туса паратпăр. Никамшăн та вăрттăнлăх мар, укçа-тенкĕ чылай чухне çитерме йывăр. Кун пек чухне вара эпир страхланăшăн тӳлемелли укçана икĕ пайпа йышăнатпăр. Укçан иккĕмĕш пайне тепĕр 4 уйăхран тӳлесе татма пулать.

**– Çак ыйтăва манăн тата ыттисен те пĕлес килет пулĕ. Страховани рынокĕнчи хăш-хăш компанисем, уйрăмах пирĕн тăрăхра тĕл пулаканнисем, патшалăх пайĕллĕ шутланса тăраççĕ?**

– Паянхи куна пирĕн компани Раççейри страхлакан компанисенчен патшалăх пайĕллĕ пĕртен-пĕр компани шутланать.

**– Сирĕн тытăмри «Моргауши – Согласие» ял хуçалăх кредит кооперативĕ те ăнăçлă ĕçлет, халăха йывăрлăхра пулăшать – камăн çурт-йĕр юсамалла, теприн автомашина урапи улăштармалла е тата аслă пĕлӳ илмелле тата ытти те – йăлтах сирĕн паталла çул тытаççĕ.**

– Çапла, хăвăр та куратăр акă, укçа-тенкĕ кирлĕ çынсем тăтăшах кунта килеççĕ, вăл шутра хресчен (фермер) хуçалăхĕсен ĕçченĕсем те. Эпир «АПК-на аталантарасси» нацпроекта килĕшӳллĕн ĕçлетпĕр.

**ПИРЕ ТАВ ТĂВАÇÇĔ**

**Пире чăтмалла мар пысăк хуйхă килсе çапрĕ, кил-сурт тĕппипе çунса кĕлленчĕ. Çак инкек хыççăн çутă кун та тĕттĕм туйăнчĕ. Кун пек хуйхăна никамăн та курмалла ан пултăр. Юрать-ха эпир маларах хуçалăха «Поддержка» патшалăхăн страхлакан компанин Муркашри представительствинче страхларăмăр. Çапла вара хуçалăх кĕлленнĕ хыççăн представительство пуçлăхĕ Ф.В. Кирпичникова пирĕншĕн нумай тăрăшрĕ, документсем пухассипе те тимлерĕ. Страховани укçине пире туллин тӳлерĕç, çакă пирĕншĕн пысăк тĕкĕ пулчĕ. Манăн Фаина Валентиновнăна чунтан тухакан ăшă сăмахпа тав тăвас килет. Сирĕн тата унти ĕçченсен ырă кăмăлĕ нихăçан та ан иксĕлтĕр. Пире ырă туни хăвăра та ырăпа таврăнтăр.**

**КАБУРКИНСЕН çемйи.**
Куçкин ялĕ.

**Кĕркунне пирĕн çемьешĕн пысăк хуйхă пулчĕ, ĕне сарăмсăр вилчĕ. Юрать-ха ăна маларах «Поддержка» патшалăх страхлакан компанире страхларăмăр. Пĕчĕкшерĕн пухса пынă укçапа ĕне туянма çăмăл мар. Пире вара страхлакан компани пире вăхăтра пулăшрĕ. Тавтапуç çын хуйхине ăнланма пултаракан ĕçченсене пирĕншĕн тăрăшнăшăн.**

**ТИМОФЕЕВСЕН çемйи.**
Сосновка ялĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА**
**калаçнă.**

**Районта – ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ**

# «Муркашсем çĕнĕлĕхсен уттинчен юлмаççĕ»

***Чăваш Ен Президенчĕ М. Игнатьев республикăри суту-илӳ лавккисенчи хаксен йĕркелĕвне, муниципалитет нушисем валли тĕрлĕ тавар туянассин тухăçлăхĕн темине, вырăнсенче çĕнĕлĕхсене епле пурнăçа кĕртсе пынине тăтăшах кун йĕркинче тытать. Иртнĕ эрне кун, раштав уйăхĕн 9-мĕшĕнче, Муркаш ен экономикинчи лару-тăрупа çывăхрах паллашма районта Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – Чăваш Республикин экономика аталанăвĕн, промышленноçпа суту-илĕвĕн министрĕ И.Б. Моторин ертсе пыракан ĕçлĕ делегаци пулчĕ.***

– Пирĕн паянхи тĕп тĕллев – унчченхи çурта реконструкцилесе унăн никĕсĕнче производство бизнес-инкубаторне тăвассипе ĕçсем епле пынипе паллашасси. Кунашкал объектсем хальхи вăхăтра Муркаш тата Элĕк районĕсенче пурнăçа кĕрсе пыраççĕ. Эсир ку ĕçре «пионерсем» пулни пире савăнтарать. Анчах пуçланă объектсем графикпа хута кайсан ку сирĕншĕн те, республикăшăн та пысăк çĕнтерӳ пулĕччĕ. Каласа хăвармалла, Муркашсем çĕнĕлĕхсенчен юлманни пире те хавхалану парать, – терĕ Иван Борисович район администрацийĕнче ирттернĕ канашлура. Кунти калаçу Чăваш Республикинче 2010–2020 çулсенче пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăна аталантарассипе республика программи епле пурнăçа кĕрсе пыни пирки пулчĕ.

Пирĕн район центрĕнче производство бизнес-инкубаторне тăвассипе ĕçсем епле пынипе хăнасене тата пухăннисене район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов каласа пачĕ. Унăн сăмахĕнчен çĕнĕ объект раштав уйăхĕн 25-мĕшĕнче ĕçлеме пуçламалла. Çакна валли кунта 6715 пин тенкĕлĕх ĕçсем пурнăçланă та ĕнтĕ. «Чувашагроинвестстрой» строителĕсем паян иккĕмĕш хутра шалти монтаж ĕçĕсене пурнăçлаççĕ. Фирмăн генеральнăй директорĕ В. Борисов каланă тăрăх кунти юсавпа монтаж ĕçĕсем юпа уйăхĕнче пуçланнă. Район администрацийĕ тимлĕх уйăрнипе ĕçсем хăвăрт пулса пыраççĕ.

– Производство бизнес-инкубаторне ĕçе кĕртнипе районта пĕчĕк тата вăтам бизнеса аталанма пулăшмалли инфраструктура йĕркеленет. Пурнăçăмăра кĕрсе пыракан çĕнĕлĕх ĕçхĕле производствăпа çыхăнтарнă предпринимательсене малалла аталанма лайăх условисем туса парать. Производство бизнес-инкубаторĕнче пĕчĕк предпринимательствăн 20 субъекчĕ вырăн тупĕ. Кунтах çĕнĕрен 76 ĕç вырăнĕ уçăлĕ. Вĕсенчен 56-шĕ – пачах çĕнĕрен йĕркеленнипе паллă. Кунта 12 производство цехĕпе 15 офис пӳлĕмĕ тата конференц-зал пуласси те производство бизнес-инкубаторĕн пуласлăхĕ шанчăкли пирки калать, – паллаштарчĕ малашлăхпа район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов.

Çĕнĕ ĕç-хĕлпе паллашнă май производство бизнес-инкубаторĕнче маларах палăртнă пӳлĕмсемпе пĕрлех çĕвĕ, йăлари пластмасс каяшсене тирпейлемелли тата пластмассăран çĕнĕ изделисем хатĕрлемелли, ятарлă кантăксен, энерги перекетлекен стеклопакетсен тата ытти цехсем ĕçлемелли пирки те калаçу пулчĕ. Апла пулсан ку Муркашра пĕчĕк бизнеса кӳлĕнекенсемшĕн ырлăх кăна пулĕ.

Иван Борисович Моторин унччен ял хуçалăх машинисене пуçтарса çитермелли цех йышăннă лаптăк – 710 тăваткал метр – ÿснипе те кăмăллă пулчĕ. Юсавпа монтаж ĕçĕсем хыççăн кунти производство 1070 тăваткал метр çинче «йăва çаврĕ».

– Çак бизнес-инкубаторăн малашлăхне мĕнре куратăр? – ыйтрĕ Иван Борисович «Моргаушский» пасар директорĕнчен Е. Субботинран.

Предпринимательсемпе куллен çыхăнура тăракан тата бизнес-инкубатор пуçарса яракансенчен пĕри шутланакан Евгений Николаевичăн хуравĕ ансат та татăклă пулчĕ:

– Пурнăç çулĕ çине тухакан çамрăксене предпринимательствăпа интереслентерсе вĕсене бизнесра пуçламăш утăмсем тума пулăшасси – пĕрлехи тĕллев. Интереслĕ ĕмĕтсемлĕ çамрăк бизнесменсем вара пирĕн хушăмăрта сахал мар.

И. Моторинпа пĕрле çак кун районта Чăваш Республикин Экономика аталанăвĕн, промышленноçпа суту-илӳ министерствин предпринимательствăпа алă ĕçне аталантарас пай пуçлăхĕ Елена Сергеева, ЧР Экономика аталанăвĕн, промышленноçпа суту-илӳ министерствин регионсенчи аталану программисен тата патшалăх инвестицийĕн пай пуçлăхĕ Екатерина Кузьмина та пулчĕç.

– Муркашсем яланхиллех çĕнĕлĕхсене пурнăçа кĕртес ĕçре малтисен ретĕнче пулни курăнать. Паянхи хыççăн пирĕн автономнă коммерциллĕ мар «Муркашри бизнес-инкубатор» организацие уçма килмелли кăна юлать, – терĕç кĕске калаçура Елена Евгеньевнăпа Екатерина Геннадьевна.

Производство бизнес-инкубаторĕнчи ĕçсемпе паллашнă хыççăн ĕçлĕ ушкăн «Мастер-Сити» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра пулса курчĕ, кунти ĕçсемпе паллашрĕ. Общество директорĕ А. Давыдов хăнасене общество хăйĕн вăйĕпе пурнăçа кĕртекен программăсемпе, мĕнле çĕнĕлĕхсене хăш çулпа кайса пурнăçа кĕртнипе, предприятири ĕç условийĕсемпе паллаштарчĕ.

Республикăран килнĕ хăнасем кунта хатĕр продукцисен складĕнче, парикмахерскинче, атă-пушмак юсакан тата продукци çĕлекен цехсенче пулса курчĕç.

«Мастер-Сити» чикĕллĕ яваплăхлă обществăран тухсан пĕрлехи ушкăн Муркаш райповĕн тытăмĕнчи Лантăшра вырнаçнă «Муркаш çăкăрĕ» чикĕллĕ яваплăхлă обществăна çитрĕ. Çăкăр пĕçерекенсен тăрăшулăхĕпе Муркаш райпо канашĕн ертӳçи Б. Андреев паллаштарчĕ. Кунта 3 сменăпа тăрăшакан 4 бригада талăксерен 1 тонна та 300 килограмм çăкăр пĕçерсе кăларса лавккасене ăсатать.

– Продукци ассортименчĕ еплерех? – кăсăкланчĕ И. Моторин.

– Ыранхи кунпа пурăнатпăр. Çавăнпа та продукци ассортиментне ÿстересси те кун йĕркинче малти вырăнта. Паян кунта çăкăр-булка изделийĕсемпе пĕремĕк-шушкăна 50 ытла ассортиментпа кăларатпăр. Халăх ыйтăвне шута хурса ĕçленĕрен ăна йăлтах район территорийĕнче реализацилетпĕр, – терĕ Борис Васильевич.

Асăннă объектсенче пулнă хыççăн хăнасем хакланипе килĕшмесĕр тăма пултараймарăм: районăмăр çыннисем чăнах та çĕнĕлĕхсен утăмĕнчен юлмаççĕ.

**А. БЕЛОВ.**

# Асламăшне – вĕри утюгпа...

**Прокуратурăран**

**Малалла мĕн калассине вара кашниех ăнкарать пулĕ, анчах та ăçтан тухма пултарать-ха çын тенин сăмахпа каласа ăнлантарайми тискерлĕх, чунсăрлăх?..**

Шаптак ялĕнче çуралса ÿснĕ В.В. Димитриев каç еннелле çирĕп режимлă колониренреn тăван тăрăха таврăнать. Тĕрĕссипе вара ăна ирĕкрен темиçе хут та хăтарнă. Арçыннăн айăплав ĕçне алла илсен чăнчăн «ĕç кĕнеки» куç умне тухать. Ăна ирĕкрен хăтарни 1997 çулхи апрель уйăхĕнчен пуçланать те 2–3 çул урлă умлă-хыçлă унталла-кунталла ылмашăнса пырать, пĕтĕмĕшле çакăн пек пурнăç вунă çулпа танлашать. Йĕркеллĕ пурнăçран писме ĕлкĕрнĕ хĕрĕх çула çывхаракан арçыншăн тепĕр çынна хĕнесси, унăн сыпăхне хавшатасси, кунçулне амантасси нимĕн те мар. Йĕркеллĕ çын шухăшĕпе пурнăçа çăмăлттайла ирттернĕ хыççăн çĕнĕрен йĕркеллĕ пурнăç пуçлама вăхăт çитнĕ пек туйăнать.

Умра тахçантанпах курман урам, лере, ав, яшкĕрĕм сасси, хутран-ситрен йытă вĕрни илтĕнет – тем тесен те тăван тăрăхран хакли нимĕн те çук.

Васкаса утакан çын чун-чĕрешĕн çывăх туйăнакан тĕлелле çывхарать. Шак-шак тутарса çĕрле асламăшĕн хапхине уçать, унтах ăна хăйĕн ывăлĕ те кĕтсе илет. Вăтă çын тарăн шухăша путнă та малашне шăкăл-шăкăл пурăнасси çинчен ĕмĕтленет ĕнтĕ.

Маларах вара В. Димитриев Шаптакра пурăннă, ашшĕ-амăшĕ çĕре кĕнĕ хыççăн Çулав ялне асламăшĕ патне пурăнма куçнă. Çапла вара тахçанах пĕр-пĕрне курман йышăн калаçмалли, сӳтсе явмалли, аса илмелли тупăнать. Кăшт вăхăт иртсен В. Димитриев ывăлĕ урама тухать.

Каç сĕмлĕхĕнче чӳречерен икĕ çын мĕлки курăнать. Тăван кĕтес тем тесен те ырах çав. Çул çинчен кăшт канса илнĕ хыççăн арçын вĕри утюгпа шăлавар якатма тытăнать, çав хушăрах асламăшĕпе пуплешет, анчах вĕсен сăмах тĕрĕ еннелле каять. Çак самантрах арçын вăтă çынна хĕсĕрлеме пуçлать, унран вунă пин тенкĕ укçа тапăнса ыйтать. Паллах, вăтă çын хирĕçлет, ара вăл пенси укçинчен пухкаласа пынă укçа вĕт. Ĕç-пуç ăна хирĕçле çаврăнса тухни В. Димитриева çын картĕнчен кăларать, вăл вăтă çынна питĕнчен çапать. Çакăнпа кăна çырлахмасть-ха пӳтсĕркер, асламăшне утюгпа тӳплеттерет. Кинемей çакна тӳсейместĕр сулăнса каять, çĕре тĕшĕрĕлсе анать, куçĕ хуралса килет. Асламăшне арçын хĕненĕçем хĕнет, йывăр чăмăр пĕрин хыççăн тепри тӳплетсе анать. Вăтăскер вара пурпĕр укçа пама килĕшмест-ха. Халĕ вара тискер кайăк туйăмĕллĕ арçын асламăшне хывăнтарать, вĕри утюгпа пĕçертме пуçлать. Тинех халран кайнă кинемей мăнукĕн ыйтăвне тивĕçтерме килĕшет. Çапла вара вĕсем иккĕшĕ пахчана тухаççĕ. Чылай асапланнă хыççăн кинемейĕн алли-урисем тăр-тăр чĕтреççĕ, куçĕнчен вара куççуль тумлать. Асламăшĕ вара маларах укçана типтерлĕн кăна сутă хутпа чĕркесе йывăç ещĕке хунă пулнă. Паллах, вăтă çын çапла майпа тăкалама ĕмĕтленмен ĕнтĕ вунă пин тенкĕне. Тенкĕ çумне тенкĕ пухса пынă укçана чунне хĕстерсех асламăшĕ мăнукне тыттарать, унпа арçын тĕрĕс усă курма пĕлет пулсан юрать-ха. Çăмăлттай арçын вара çав укçана шалах, тĕплĕнрех пуçтарса чикме те пултараймасть, урама тухсанах кинемей тахçанччен пухса пынă укçана кăларса ӳкерсе сухатать! Арçын каланă тăрăх çак укçа ăна эрех ĕçессинчен сиплеме (кодировани), ĕçе вырнаçичен пурăнма кирлĕ пулнă имĕш. Анчах та вырăнлă усă курма пĕлчĕ-и-ха В. Димитриев асламăш укçипе?

Асламăшĕпе пĕр килçуртра пурăннă чухне мăнукĕшĕн сахал мар ĕçме çиме янтăланă, хура-шур тасатнă. Тав сăмахĕ вырăнне вара мăнукĕ ăна вăхăтран вăхăта хĕненĕ, тимлĕхшĕн çапла майпа «тав тунă». Çакăншăн ăна йĕрке хуралçисем пĕрре кăна мар асăрхаттарнă, айăпланă. Çапла вара сурансем самай хавшатаççĕ вăтă çынна, ăна больницăна илсе кайма тивет.

Анчах та саккунран хăпаймăн, саккун пуриншĕн те пĕрре. Ку уголовлă ĕç тĕлĕшпе район прокурорĕн çумĕ Ю.М. Семенов тимлет. Çапла вара хăй айăпне туллин йышăннă В. Димитриевăн каллех тăватă çул пита йĕплĕ пралук леш енче пулма тивĕ. Анчах та вăтă çын кăçарĕ-ши çăмăлттай шухăшлă пӳтсĕр мăнукне?

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Наградăсем**

## Хастар ĕçленĕшĕн

Ял хуçалăхĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Чăваш Республикин Президенчĕн 2011 çулхи чӳк уйăхĕн 9-мĕшĕнче кăларнă 99-мĕш указĕпе килĕшӳллĕн Муркаш районĕнчи В.И. Чапаев ячĕллĕ ял хуçалăх производство кооперативĕн механизаторне **Юрий Иосифович СКВОРЦОВА** «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ механизаторĕ» хисеплĕ ят панă.

**Патшалăх пулăшăвĕ**

## Ял аталанать

Районта пурăнакансем килти хушма хуçалăха аталантарасси çине пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Çак тĕллевпе патшалăх пулăшăвĕ те малти вырăнта. 2006 çултан пуçласа «АПКна аталантарасси» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн пĕчĕк хуçалăх формиллĕ хуçалăхсене ĕçлеттерекен ял çынни çăмăллатнă кредитсене пĕтĕмпе 11,5 миллиард тенкĕ илнĕ. Вăл шутран килти хушма хуçалăха аталантарма – 10,2 миллиард тенкĕ.

Килти хушма хуçалăх тытакансенчен нумайăшĕ çăмăллатнă кредитпа пĕрре çеç мар усă курма ĕлкĕрнĕ. Çапла вара килти хушма хуçалăхра та нумай ĕçсене механизацилеме çул уçăлнă. Килти хушма хуçалăхра пухнă ĕç опычĕпе вĕсенчен чылайăшĕ каярах хресчен (фермер) хуçалăхĕ йĕркелес çул çине тăрать.

Çитес çултан ĕçлеме пуçлакан «Ĕçе анчахрах кӳлĕнекен фермера пулăшасси» отрасль программипе те ялта пурăнакансем тулăх усă курасси пирки иккĕленӳ çук.

**А. ПЕТРОВ.**

**Пушар хуралĕ асăрхаттарать**

## Елка теттисем тата хăрушсăрлăх

Раштав Çĕнĕ çул çывхарнине систерет. Илемлĕ вăхăт. Кашниех унран асамлăх кĕтсе ăна анлă уявлама хатĕрленет. Çĕнĕ çул вăл – политикăн нихăш енне те пырса тивмен уяв. Çавăнпах ăна пур те пĕр йышра уявласси халăхăн çирĕп йăлинче тата ăна кĕтсе илесси те çынсем хушшинче пысăк уяв вырăннех. Çак самант ытларах асра юлтăр тесе ĕç е ытти коллективсенче уява паллă тума тăтăшах çĕнĕлĕхсем кĕртеççĕ, елкăна электричествăн илемлĕ çутипе, тĕрлĕ çуртасемпе капăрлатаççĕ, савăнăç хăтне анлăлатма пиротехника изделийĕсемпе ытлă-çитлех усă кураççĕ. Халĕ каланине шута илсе шăпах çак тапхăр пушар тухаслăх тĕлĕшпе пысăк хăрушлăх кăларса тăратать. Çакна çулленхи анализсем те çирĕплетсе параççĕ. Манмалла мар, çакăнта шăпах илĕртӳллĕ пиротехника изделийĕсем малти вырăнта тăраççĕ.

Çĕнĕ çул çывхарнă май магазинсемпе пасарсенче пиротехника изделийĕсемпе сутă тăвасси, çынсем вĕсене уяв валли туянасси пурнăçа кĕме пуçларĕ. Кунта паянхи рынок пиротехника изделийĕсенчен питĕ пуян пулнине палăртмалла. Вĕсем хушшинче иккĕленӳллĕ производство продукчĕсем те çук мар. Шăпах вĕсене туянакан савăнăç кĕрекине хăрушлăх илсе кĕртет те ĕнтĕ. Кунпа пĕрлех пиротехника хатĕрĕсене ачасене шанса пани те инкеке çул уçни тесе калассăм килет. Пиротехника хатĕрĕсен хăрушлăх факторĕсем тĕрлĕ енлĕ: вĕсен куçăмĕн кинетика энергийĕ, сирпĕнес вăйĕ, ванчăкĕсем инçете сапаланас туртăмĕ т. ыт. те.

Пасарта е магазинта асăннă таварсене туянакан малтанах çакна пĕлмелле. Пиротехника хатĕрĕсене ваккăн сутма суту-илӳ залĕллĕ магазинсемпе павильонсенче кăна ирĕк пур е куçса çӳрекен ятарлă киосксенче.

Асăннă препаратсемпе сутă тăвакансем тĕлĕшпе вара çакнашкал асăрхаттару пур: сутăва кăларакан пиротехника хатĕрĕсене упрама ятарлă пӳлĕмсем кирлĕ. Вĕсемпе усă курассине тата унта мĕн чухлĕ пиротехника хатĕрĕ упрассине вырăнти патшалăх пушар надзорĕн органĕсемпе килĕшсе палăртмалла. Юрăхсăра тухнă пиротехника хатĕрĕсен хăйсен уйрăм вырăнта упранмалла.

Кашни пиротехника изделийĕпе пĕрлех (ваккисене валли – кашни упаковкăрах) унпа епле усă курмаллине вырăсла çырнă инструкци пулмалла. Вĕсемпе сутă тунă вырăнсенче çак хатĕрсене ĕçлеттерсе тĕрĕслесси пулмалла мар.

Кĕскен каласан, Çĕнĕ çул фейерверкĕ савăнăç çеç илсе килтĕр тесен пасарсенче е ют çынран иккĕленӳллĕ пиротехника хатĕрĕсем ан туянăр. Туяннисемпе те усă куриччен инструкцийĕсемпе тĕплĕн паллашăр.

Çывхаракан Çĕнĕ çул савăнăç çеç илсе килтĕр!

**А. ЕФИМОВ,**
**патшалăх надзор ĕçĕн районти уйрăмĕн ертӳçи.**

**Объявления**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:101102:10, местоположение установлено относительно ориентира, расположенного в границах участка. Почтовый адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, д. Адабай, ул. Новая, д.6, для индивидуального жилищного строительства, площадью 4195 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

***

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:070101:76, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, земельный участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:070101, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6151 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

# Кĕвĕçӳ?

**Ирпе ирех фермăна ĕçе пынă хĕрарăмсене çĕрле кунта хуралта пулнă Лиза тискерленнĕ, юнланса шыçнă пит-куçпа кĕтсе илчĕ. Ирхи сменăра ĕçлеме вăй çуккине пĕлтерсе хул-çурăмĕ ытла хытă ыратнăран вăраххăн çеç киле утрĕ...**

**Пӳрте кĕнĕ Лиза çине пăхсан Галина хĕрĕ йĕрсе ячĕ. Хăвăртрах «васкавлă пулăшăва» шăнкăравларĕ.**

Хуçалăхри фермăра сыснасене пăхакан Лиза каçхи смена хыççăн паян тӳрех киле каймарĕ, хурала юлчĕ. Ачисем пĕчĕк мар, ӳснĕ ĕнтĕ. Çавăнпах хуралта ĕçлеме те килĕшнĕ вăл. Фермăн кашни кĕтесне тĕрĕслесе çаврăннă хыççăн хĕрарăм каçхи апата тесе киле кайса килме шутларĕ.

Тăхăр сехет тĕлнелле хуралçă каялла фермăна çитрĕ. Паян унпа пĕрле упăшки те пычĕ. Тепĕр хуралçăпа, пĕр ялта пурăнакан Татьянăпа, фермăна тепĕр хут тĕрĕслесе тухрĕç. Пĕтĕмпех йĕркеллĕ. Хурал пӳртне кĕчĕç.

Калаçу темĕн тавра та пулчĕ – ял çыннин хуравсăр ыйту чылай. Ăнланакан çынпа вара чуна уçса калаçни те паха.

– Ачусем патне Мускава мĕнле кайса килтĕн? – интересленчĕ Татьяна.

Лизăн юнашар ларакан упăшки çакна илтсен тарăхса кайрĕ. Ĕçтешне хурав пама та ĕлкĕреймерĕ Лиза, упăшкин чышки питĕнчен лекрĕ. Арăмĕ Мускава каяссинчен питĕ хăрать-çке Çтаппан. Ырă кăмăллă, ĕçчен хĕрарăма кам килĕштермĕха? Япала вырăнне хума хăнăхнă пулас вăл мăшăрне: е манăн, е никамăн та.

Пĕр-икĕ уйăх каялла яла килнĕ ачисем амăшне яланлăхах пурăнма Мускава куçма чылай ӳкĕтлерĕç те...

– Арăмĕпе упăшки хирĕçнине курман-и эсĕ? Эпир тата пĕр-пĕрне тахçантанпах курманскерсем иккĕн юласшăн, – тесе шахвăртса калаçса Çтаппан Татьянăна хурал пӳртĕнчен тĕксех кăларса ячĕ.

Кирлĕ сăмахсем тупса Лиза упăшкине кăшт лăплантарма пултарчĕ. Ыран ĕç кунĕ, çĕрле канса илмелле тесе хĕрарăм вырăн çине выртрĕ. Сехет йĕпписем çĕн кун çитиччен пĕр сехет майлă юлнине кăтартрĕç. Çтаппан киле каймарĕ. Кунтах çĕр каçассине пĕлтерсе арăмĕпе юнашар вырнаçрĕ. Тарăхни, кĕвĕçни вара пурпĕр иртсе каймарĕ-ха унăн.

– Ниçта та ямастăп, илтетĕн-и? Малтан сана вĕлеретĕп, кайран – хама, – çаплах лăпланма пĕлмерĕ арçын.

Хăй пĕрмаях сехет çине пăха-пăха илчĕ. Çĕрлехи пĕр сехет тĕлнелле Çтаппан вырăн çинчен тăчĕ те тула тухрĕ. Лиза та темĕн япăххине сиссе тăрса çутă çутрĕ. Çав вăхăтра Çтаппан пӳрте калунпа кĕрсе тăчĕ. Çиллине пусарайманскер калунпа арăмĕ еннелле сулса ячĕ. Юрать Лиза ăна авăрĕнчен тытса юлма май тупрĕ.

– Вĕлеретĕп! – хаяррăн кăшкăрашрĕ арçын. – Вĕлеретĕп сана!

Калуна туртса илме пултараймассине сиссе Çтаппан унпа арăмне кăкăрĕнчен пĕтĕм вăйран тĕкрĕ. Сывлăш çавăрса илчех Лиза. Темĕнле майпа калуна туртса илсе вырăн айнелле ывăтса яма пултарчĕ вăл. Упăшки вара çав вăхăтра кăмака çумĕнчи швабрăна илсе мĕн пур вăйĕпе арăмне пуçран çапрĕ.

Арçын çаплах вĕлерессипе хăратма чарăнмарĕ. Лиза швабрăна хăй аллине илес тесе тăрăшрĕ. Çапла швабрăшăн чылай кĕрешрĕç вĕсем. Лиза пĕрмай: «Ниçта та каймастăп эпĕ. Чарăн, лăплан-ха», – теме çеç пĕлчĕ.

Çтаппан арăмне кравачĕн тимĕр пуçĕ çумне хĕссе лартрĕ. Вăл швабрăна туртса илесрен питĕ хăрарĕ Лиза: мăй урлă çав «патак» выртасран шикленчĕ. Таçтан вăй тупса хĕрарăм швабрăна кăмака хыçне ывăтса яма пултарчĕ. Урса кайнă упăшка вара çав хушăрах кравать айĕнчи калун патне ыткăнчĕ. Лиза ăна кофтинчен хăй еннелле туртса илчĕ, лешĕн алли калуна тытма ĕлкĕреймерĕ. Çакна кура Çтаппан арăмĕ енне çаврăнчĕ те аллисемпе мăйĕнчен ярса илчĕ.

– Çавах вĕлеретĕп! Хыççăн хам çакăнатăп! – кăшкăрашрĕ вăл ухмаха тухнă евĕр.

Лиза упăшкин вăйлă аллисене вĕçертме пултараймарĕ. Çтаппана питĕнчен, тутинчен аллисемпе тулланинчен ытла нимĕн те тăваймарĕ. Арçын хăйне кăшт ыраттарнине чăтаймасăр аллисене вĕçертрĕ те арăмне çӳçĕнчен туртса лартрĕ, хăйĕн пуçĕпе хĕрарăма темиçе хутченех питĕнчен çапрĕ. Ыратнине чăтаймасăр Лиза макăрса ячĕ. Хурал пӳртĕнчен темиçе хутах тухса тарма хăтланчĕ – кăлăхах.

– Манăн тула тухса кĕмелле, кăлар, – тесе суйма та пикенчĕ. Упăшки вара хĕрарăм умне раковина айĕнче ларакан витрене лартрĕ.

– Акă, ме. Ниçта та тухас çук, – терĕ кăна.

Тухса тарма пикеннĕ хĕрарăма алăк патне ямарĕ арçын. Лиза вара ăна хырăмĕнчен аяларах çапма пултарчĕ. Иккĕшĕ те çĕре ӳкрĕç. Çакăнпа усă курса Лиза ценĕке тухса тарчĕ. Урама тухмалли алăка шал енчен ытла тĕплĕ питĕрнĕ пулнă çав – ăна уçма хĕрарăмăн вăй çитмерĕ. Татьяна инçех мар пуль тесе Лиза ăна пулăшма ыйтса кăшкăрчĕ. Упăшки ăна каялла пӳрте тĕксе кĕртесшĕн пулчĕ.

Çенĕкре пăта çинчи вĕрене илмесĕрех унăн пĕр вĕçĕпе Çтаппан арăмне каллех пăвма пуçларĕ. Хĕрарăм вĕçерĕнме пултарчĕ. Урайĕнче ларакан канистрăпа та çапма хăтланчĕ арçын. Çенĕк алăкне уçма пултарса хĕрарăм урама ура ярса пусрĕ, упăшки вара пушар щичĕ çинчи лом патне аллине тăсрĕ. Илеймерĕ вăл тимĕре – арăмĕ чăрмантарчĕ.

Çтаппана тăрук темĕн пулчĕ тейĕн: урăх кун пек нихăçан та тумас тесе арăмĕнчен каçару ыйтма тапратрĕ.

Юлашки мĕн пур вăйпа Лиза картаран тытăнса тăчĕ.

– Çынсем киличчен çак картаран пĕр утăм та уйрălмастăп, – тесе тепĕр енне пăхрĕ – çынсем ĕçе килекен çул енне.

Шăпах пĕр хĕрарăм ĕçе килни курăнчĕ.

– Вĕлерейменрĕм сана, халĕ полицие пĕлтеретĕн ĕнтĕ эсĕ, – тесе Çтаппан ял еннелле утрĕ.

**Пичете О. КУЗНЕЦОВА дознавателĕн материалĕ тăрăх Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

Спорт хыпарĕсем

## Йĕлтĕрçĕсем «бронзăпа» таврăнчĕç

Иртнĕ шăмат кун, декабрĕн 10-мĕшĕнче, ача-пăчапа çамрăксен спорт шкулĕн йĕлтĕрçисем Шупашкар хула ăмăртăвĕнче вăй виçрĕç. Ярапайкассинчи уйрăмра Э.А. Гордеев тренер ертсе пынипе ăсталăха туптакан çамрăк спортсменкăсем хăйсене эстафетăра тĕрĕслерĕç. Диана Чернова, Светлана Соколова тата Анастасия Костина 3-шер çухрăмлă дистанцисенче хăйсене япăх мар кăтартрĕç: Муркаш районĕнчи хĕрсен команди киле 3-мĕш вырăнпа таврăнчĕ.

Йĕлтĕрçĕсен сезонĕ вăй илсе кăна пырать-ха, апла малашне татах та пысăкрах ăнăçусем тума сунатпăр вĕсене.

**Ф. РЫЛИН, ача-пăчапа çамрăксен спорт шкулĕн завучĕ.**

Эпир – сывă пурнăç йĕркишĕн

## Сывлăхлă пулнин усси тĕрлĕ енлĕ

Чуманкассинчи вăтам шкулта çулсеренех «Сывлăхлă класс» конкурс иртет. Йăлана кĕнĕ тăрăх çак ята тивĕçес ĕçе ачасем кăна мар, вĕсемпе пĕрле ашшĕ-амăшĕсем те, класс ертӳçи те хутшăнать.

«Сывлăхлă класа» палăртма «Çамрăксем – сывă пурнăç йĕркишĕн» акци пулăшать. Март–апрель тата октябрь–ноябрь уйăхĕсенче классене тĕрлĕ енпе тĕрĕслерĕмĕр: класри ачасем шкулта спорт мероприятийĕсем ирттерни, ытти спорт ăмăртăвĕсене хутшăнни, походсемпе экскурсисене тухса çӳрени, шкул столовăйĕнче мĕнле апатланни, чирленипе урок сиктерни, класри ачасен сиенлĕ йăласем пурри тата ытти те.

«Çамрăксем – сывă пурнăç йĕркишĕн» акцин кĕрхи тапхăрĕнче «Сывлăхлă класс» ята 5 класс çĕнсе илчĕ. Çапла вара вĕсем (виçĕ сехет тӳлевсĕр) «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕнче хăйсен вăхăтне усăллă ирттерчĕç. Тренажер залĕнче, бассейнра вăй виçрĕç, спорт залĕнче баскетболла вылярĕç. Ачасем хушшинче сĕтел çи теннис енĕпе мини-турнир та пулса иртрĕ. Унсăр пуçне вĕренекенсем хăйсене ташă кружокĕнче те тĕрĕслесе пăхрĕç.

Киле таврăниччен вара ачасем Муркашри музейра тĕрлĕ экспонатсемпе паллашрĕç. Кун питĕ интереслĕ те усăллă иртнине пурте палăртрĕç.

**В. НИКОЛАЕВА, директорăн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ.**

Прогноз погоды

| Местное время | среда 14 декабря 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | четверг 15 декабря 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | пятница 16 декабря 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | -4 | -3 | -2 | -2 | -2 | 0 | 0 | 0 | 0 | +1 | +1 | 0 |
| Давление мм | 756 | 756 | 755 | 755 | 756 | 755 | 755 | 755 | 755 | 755 | 755 | 754 |
| Влажность % | 92 | 93 | 95 | 96 | 94 | 95 | 94 | 96 | 99 | 98 | 93 | 91 |
| Ветер м/сек | Ю 3 | Ю 4 | Ю 5 | Ю-З 5 | Ю-З 5 | Ю 5 | Ю-З 5 | Ю 5 | Ю-З 5 | Ю-З 5 | Ю 5 | Ю 6 |
| Солнце восход/заход | | 09:16 | 16:18 | | | 09:17 | 16:18 | | | 09:18 | 16:18 | |
| Луна восход/заход фаза | | 20:45 | 11:21 | | | 22:05 | 11:41 | | | 23:27 | 11:59 | |

Пулăшнăшăн

## Тав тăватпăр

Пирĕн юратнă мăшăра, аттене, сывăх тăванăмăра – Çатракасси ялĕнче пурăннă Валерий Димитриевич Федорова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, пирĕнпе пĕрле çак пысăк хуйхăна пайланăшăн «Свобода» пĕрлешӳллĕ хуçалăх правленине, Çатракассинчи ĕне фермин, Йӳçкассинчи вăтам шкул коллективĕсене, тăван-хурăнташсене, пускилсене, ял çыннисене пĕтĕм чунчĕререн тухакан тав сăмахĕ калатпăр.

**Федоровсен çемйи.**

## РОСГОССТРАХ продолжает компенсационные выплаты

В соответствие с Постановлением Правительства № 1171 от 28.12.2010 г. РОСГОССТРАХ продолжает осуществление компенсационных выплат по договорам страхования жизни, заключенным до 1 января 1992 года.

Компенсации подлежат договоры накопительного личного страхования, заключенные до 1 января 1992 года и действующие на эту дату. К ним относятся: договоры страхования к бракосочетанию, детские договоры страхования, смешанные договоры страхования жизни, договоры страхования дополнительной пенсии.

В 2011 г. выплаты осуществляются в следующем порядке:

- для граждан по 1945 год рождения включительно: в 3-кратном размере остатка вкладов (взносов) по состоянию на 1 января 1992 года.
- для граждан 1946-1991 годов рождения: в 2-кратном размере остатка вкладов (взносов) по состоянию на 1 января 1992 года.
- размер выплаты уменьшается на сумму ранее полученной предварительной компенсации и дополнительной компенсации по вкладам (взносам).
- в случае смерти страхователя или застрахованного лица в 2001-2011 гг., наследники (без ограничения возраста) имеют право на получение компенсации и оплату ритуальных услуг в размере до 6 000 рублей.

Граждане, относящиеся к указанным категориям, должны обратиться в **Расчетный центр компенсационных выплат ОАО «Росгосстрах»** (РЦКВ), который производит прием документов от граждан со всей России, расчет компенсации и формирование заявок в Управление федерального казначейства (УФК) по Рязанской области для перечисления денежных средств на лицевые счета граждан.

Документы принимаются и обрабатываются **до 26 декабря 2011 г.,** после чего формирование заявок в Федеральное казначейство будет приостановлена до момента подписания очередного постановления Правительства РФ об осуществлении компенсационных выплат в 2012 г.

Документы необходимо направлять в РЦКВ по адресу: 390046, г. Рязань, ул. Введенская, д.110. Телефон для справок: 8-800-200-0-900, для мобильных – 0530 (звонок бесплатный). Адрес в Интернете: www.RGS.ru

Пĕлтерӳсем. Объявления

**Февраль–март уйăхĕсенче пăруламалли тынашки е пĕрре-иккĕ пăрулан ĕне туянатăп. Тел.: 8-927-845-61-31.**

* * *

**Продаю дрова 5 куб. м., береза. Возможно доставка. Тел.: 8-903-065-58-68. 1-2.**

* * *

**Мебель от производителя, цены ниже рыночной (шкафы, кухни, стенки, прихожие, матрацы разных размеров). Тел.: 8-903-358-67-19, 8-927-859-65-51. 3-8.**

* * *

**Çулталăк та сакăр уйăхри хура-шурă тĕслĕ тынашки сутатăп. Тел.: 8-908-304-80-74.**

* * *

**Продаю двухкомнатную квартиру в с. Моргауши по ул. 50 лет Октября д. 12, 1 этаж (подвал, балкон). Тел.: 8-906-136-13-04.**

* * *

**Утерянная зачетная книжка № 611407, выданный 17 октября 2011 года Чебоксарским политехническим институтом (филиал МГОУ) на имя Егорова Димитрия Геннадьевича, считать недействительным.**

* * *

**Продается двухкомнатная квартира по адресу: с. Моргауши, ул. Заводская, д. 19, кв. 5. Тел.: 8-919-673-90-87, 8-919-673-90-89. 2-2.**

* * *

**Продаем: брус любого сечения, доски обрезные и необрезные, срубы на заказ. Тел.: 8-906-131-32-75, 8-927-859-91-55. 2-5.**

**В консалтинговую компанию «Виктория» требуется бухгалтер (для работы в с. Моргауши). Требования: женщина до 40 лет, образование – высшее экономическое, знание «1 С бухгалтерия», опыт, ответственность, обучаемость. Обязанности: обслуживание клиентов. Режим работы: полный рабочий день. Заработная плата: 10 000 руб. Резюме на E-mail: vika09-2010@mail.ru. Факс: 8(8352)22-10-60. Контактный тел.: 446-448 (сот.). 4-5.**

для пайщиков
СБЕРЕЖЕНИЯ
- АКЦИЯ "НОВОГОДНЯЯ КОПИЛКА" с 1 по 30 декабря 2011 г.
- % ставки увеличены, подарки

ЗАЙМЫ
*АКЦИЯ "НОВОГОДНЕЕ ЖЕЛАНИЕ" до 30 декабря 2011 г.*
*% СТАВКИ СНИЖЕНЫ!*
- для пенсионеров и постоянных пайщиков - **льготы**
- на покупку и строительство жилья под **МАТЕРИНСКИЙ КАПИТАЛ**

КРЕДИТНЫЙ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИЙ КООПЕРАТИВ “СОДРУЖЕСТВО”
с.Моргауши, ул.50 лет Октября, д.23, 2 этаж 62-6-86
www.kpksodrugestvo.ru 8 900 333 0001

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ**

**Кадастровый инженер Соловьева Е.А., адрес: Чувашская Республика, п. Кугеси, ул. Советская, д. 50, офис 311, тел.: 8(83540)2-26-14, квалификационный аттестат № 21-11-45, подготовила проекты межевания земельных участков, образованных путем выдела из землепользования СПК «Чемеево», с кадастровым номером 21:17:150801:1, расположенного: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение.**

**Заказчиком работ по подготовке проекта межевания земельных участков является: Фасхутдинов М.Г., действующий по доверенности, адрес: ЧР, г. Чебоксары, ул. 2-ая Чандровская, д. 36.**

**Собрание заинтересованных лиц по поводу согласования проекта межевания земельных участков состоится по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Чемеево, ул. Центральная, д. 3 в 18 часов 00 минут 15.01.2012 г.**

**С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу: ЧР, Чебоксарский район, п. Кугеси, ул. Советская, д. 50, офис 311.**

**Возражения по проекту межевания земельного участка принимаются в течение месяца со дня выхода объявления по адресу:«19» ноября 2011 г. по «19» декабря 2011 г. по адресу: ЧР, Чебоксарский район, п. Кугеси, ул. Советская, д. 50, офис 311.**

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**

**Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.**

**ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.**

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

**АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.**
**ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**

**Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.**

**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.**

**Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.**
**Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.**
**Номер дежурнăйĕ Волкова А.И.**
**Пичете панă 13.12.2011 ç.**
**Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 4364.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.